# ХĔРСЕМ — ПАРАЗИТСЕМ!!!

**Хальхи хаçатсене тата хĕрсене итлесен арçынсем ниме юрăхсăр иккен. Мĕскĕнсене эпир пур енчен те кӳрентеретпĕр: хирĕç чĕнетпĕр, парнесем илсе памастпăр, пулăшмастпăр…**

Пире мĕн пĕчĕкренех макăрма юрамасть, пĕтĕм ĕçе хамăрăн тумалла, хĕрсем кӳрентерсен те вĕсене хирĕç чĕнмелле мар, яланах пĕтĕм айăпа хамăр çине илмелле, тĕрлĕ апат-çимĕçпе те пирĕн хăналамалла тата ытти те тесе вĕрентеççĕ. Хĕр ачасене вара пачах урăхла «Ăс» параççĕ: хĕр çуралнă пулсан унăн никама та пăхăнмалла мар, вăл яланах тĕрĕс тăвать. Телейлĕ пулас тесен, ăнăçлă качча тухас тесен унăн хайĕн кĕлеткине, сăн-питне кăна пăхма вĕренмелле. Çавăнпа ĕнтĕ хальхи 9-11 класс пикисем урок вĕренес вырăнне модный журналсемпе каталогсем уçкаласа, каччăсене мĕнле çавăрмаллине «аса вĕренсе» лараççĕ. Нумайăшĕ хайсен турă панă илемлĕхпе хĕç-пăшал вырăнне усă курать. Хайсен çамрăклăхне хаклăрах хакпа «сутасшăн» тăрăшаççĕ. Паллах, пирĕн пек чухăн тата чапа тухман каччăсемпе вĕсем калаçасшăн та мар. Эпир, кашни кун ашшĕ-амăшне пулăшакансем, килтен панă укçана çирĕпрех тытакансем тата сăмахпа выляма юратманнисем — вĕсене интереслĕ мар! Эпир вĕсемшĕн иккĕмĕш сортлă çынсем! Паллах, ăçтан хĕрсем пире хаклама вĕренччĕр-ха? Вĕсен амăшĕсем пĕрмай ашшĕсене укçа сахал ĕçлесе илнишĕн, хайсене хуçалăха тытса тăма пулăшманнишăн...— вăрçаççĕ. Хĕрĕсене укçа тенкĕллине тупма ХУШАÇÇĔ! Лешĕсем юрату мĕнне туйса курмасăрах ватă стариксемпе явăçса каяççĕ, ытти 17-20 çулхи айван хĕрсем пек пĕрлешессе, пуян арăм пуласса шанаççĕ. Анчах та кĕтни кăлăхах пулĕ — сире пăрахса вĕсем сирĕнтен те çамрăкраххисене, илемлĕреххисене тупĕç. Сиссе те юлаймăр — пĕччен юлăр!



Калăпăр, пирĕн шкултах хăш-пĕр хĕрсем пирĕн «каччăсем» çине пыр тĕпĕпе кăшкăрни те пулать. Хирĕç пĕр сăмах та пулин чĕнсе пăх-ха вĕсене — хăвăн çинчен усал сăмахсемпе мĕн-мĕн çĕнни пĕлместĕн! Пĕри мар, пĕр çирĕм «Чиперук» пырса кăшкăрĕ сан çине. Вĕсен чĕлхипе хирĕç калаçмасан е çупса ямасан вĕсен çăварне хуплама та пулмасть. Каçарăр та хальхи хĕрсем, кунтан кун чăркăшланса тата укçа-тенкĕне парăнса та пăхăнса ӳсетĕр. Пирĕн авланма вăхăт çитсен ирĕксĕрех хусаххăн пурăнма тивĕ ĕнтĕ. Мана хĕрсем шкулта та хайсен кăнттамлăхĕпе йăлăхтарса çитерчĕç. Кашни кун килте арăм кăпланине чăтма вăй-хал çитерес çук. Ирĕксерех чун лăпкăлăхне е укçалла çамрăк хĕр патĕнче, е эрехре шырама тивет. Ун пек пурнăçа суйласа иличчен эпĕ пĕчченлĕхе суйлатăп!

**А., Москакасси шкулĕ**

# ЮРАТУСĂР ТЕЛЕЙ ÇУК

**Нумай каланă юрату çинчен. Кашни çак ăнлава хăйне май ăнланать. Кашниех мĕн-ши вăл чăн-чăн юрату тесе хăйĕнчен ыйтать.**

Юрату — чĕрери вĕри, асамлă туйăм. Çак туйăм яланах хĕрӳллĕ пултăр тесен чи малтанах юратма пĕлмелле иккен. «Пĕр-пĕрне шанни, упрани, ăнланма-каçарма пĕлни — юратăва нумай çулсем хушши сыхлама пулăшать», — теççĕ асаннесем. Тен, вĕсем тĕрĕсех калаççĕ? Тен, эпир хамăрăн юратăва сыхлама пĕлместпĕр. Пĕчĕк йăнăшшăнах хамăр телее, хамăрах таптатпăр. Пĕрре суранланнă чĕрене тепĕр хут пурăнма, вĕренме те çăмăл мар. «Юрату суранĕнчен эмел çук», — теççĕ. Çавăнпа та чи хаклă çынпа хутшăннă чух кашни утăма шухăшласа пусмалла, кашни сăмаха суйласа каламалла. «Çиччĕ виç те пĕрре кас» текен ваттисен сăмахне манмалла мар.



> Юрату — чĕрери вĕри, асамлă туйăм. Çак туйăм яланах хĕрӳллĕ пултăр тесен чи малтанах юратма пĕлмелле иккен.

Унсăррăн пурнăç авăрĕ сире çавăрса ярĕ те чи телейсĕр çын туса хурĕ.

Ман шутпа, çыннăн пурнăçĕ мĕнле аталанасси, унăн телейлĕ кун-çулĕ йăлтах юратуран килет. Юратура телей тупсан ытти йывăрлăхсене те çĕнме çăмăлрах. Пурнăçу та кал-кал, пĕр тикĕс пырĕ.

Сĕтел çинчи çĕнĕ апата тутаниччен эпир ăна пур енчен те хак паратпăр: куçпа сăнатпăр, шăршласа пăхатпăр, пĕчĕккĕн тутанса илетпĕр... Юрату та çамрăксемшĕн çĕнĕ апат пекех пурне те илĕртет, унăн çимĕçне пурин те тутанса пăхас килет. Тен, кунта та çавăн пекех, юрату ытамне пуçупах кĕрсе ӳкиччен малтан хăвăрăн туйăмăрсене тĕрĕслесе пăхмалла, сăпайлăхпа чыса мала хурса чун çирĕплĕхне аталантармалла? Юрату çемçе чунлисене, чыссăр хăтланакансене килĕштермест. Кунта ачашлăхпа çирĕплĕх, айванлăхпа тавçăрулăх, хастарлăхпа сăпайлăх юнашар тăраççĕ. Пурин те виçеллĕ пулмалла. Ун чухне тин эсир юрату маншăн чи тутлă çимĕç тесе калайратăр.

**Настя АЛЕКСЕЕВА**
**10С класс, Калайкасси шкулĕ**

## ЭС МАНА КИЛĔШЕТĔН...

Хĕрсем каччăн хăш енĕсене юратаççĕ:

1. Кăмăл-сипете – 48 процент
2. Каччă илемлĕ пулнине – 45 процент
3. Ырă пулнине – 40 процент
4. Ăса – 33 процент
5. Хăйне тытнине – 30 поцент
6. Юмор пулнине – 28 процент
7. Усă кăмăллă пулнине - 23 процент
8. Пирус туртманнине, эрех ĕçменнине – 20 процент
9. Ăнланма пĕлнине – 18 процент
10. Калаçма пĕлнине – 15 процент
11. Мĕнле утнине, хĕрпе калаçма пĕлнине – 13 процент
12. Интереслĕ пулнине – 10 процент
13. Романтик пулнине – 8 процент
14. Ӳт-пӳ çирĕп пулнине – 5 процент
15. Чуп тума пĕлнине – 3 процент.

***Эсир юратăр, сире те пурте юратчăр — акă вăл чи кирли.***

Ыйтăмра 50 хĕр хутшăннă. Вĕсем каччăсенче килĕшекен 5 ен палăртнă.

**Хĕрсен шухăшне**
**Настя АЛЕКССЕВА**
**тĕпченĕ**

## Хисеплĕ вулакансем!

Кĕçех Сăваплă Валентин кунĕ. Юратнă çынсене саламлама ан манăр. Редакци сиртен çак кунпа çыхăннă статьясем, саламсем, шухăшсем кĕтет.